2023-2024-мӗш вӗренӳ ҫулӗ
Шкул шайӗнчи олимпиада
Чӑваш чӗлхипе литератури (Чӑваш шкулӗ)
8 класс
Ыйтусем

Олимпиада ирттермелли вӑхӑт – 120 минут
Кашни ыйтӑва тӗрӗс хуравласан чи нумаййи 50 балл пухма пулать

1. Нумай пӑнчӑ вырӑнне панӑ сӑмахсене тӗрӗс вырнаҫтарса лартӑр: *пуҫтай, вӑйкил уйӑрни, саламалик, айтӑш.* Пурӗ – 4 балл.
а. … – ар туйӗпе хӗр туйӗ пӗр-пӗринпе ӑмӑртса юрлани.
ӑ. … – кӗрнӳкерсемпе хӗр ҫумсем юрлани.
б. … – аслӑ ҫынсенчен пил ыйтни е сывпуллашнӑ чухнехи сӑмах.
в. … – халӑха, ҫӗр-шыва, харкам ҫынсене саламласа каланӑ сӑмах.

2. Мӑшӑр сӑмахсене тӗрӗс ҫырӑр, чарӑну паллисене кирлӗ ҫӗре лартса тухӑр. Пурӗ – 9балл.
Туй ачисем каччӑсем
Туй арӑмсем сар хӗрсем
Пыл шерпетле калаҫса,
Йӑл-йӑл кулса выляса
Туй ирттерсе ямалла
Сирте ирӗк туй халӑх

3. *Уй шӑшине мӗн пур ҫӑткӑн чӗр чун тытса ҫиме тӑрӑшать. Уйрӑмах – юс, пӑсара, тилӗ, ҫӳлевӗҫ. Тӑманасем те, ула куракпа чакак та тапӑнаҫҫӗ. Пурӑш вара йӑвисене тустарать.* Вӗҫен кайӑк ячӗсене вырӑсла куҫарӑр. ***Та*** мӗнле пуплев пайӗ пулать-ши? Пӗтӗмпе – 5 балл.

4. *Хӑнӑхнӑ алӑра ӗҫ вылять кӑна. Ат пӑрипе тирнӗ чух атӑҫӑн тути сунаслас умӗнхи пек уҫӑлать, хускалкалать.*Панӑ предложенисенче танлаштару тата сӑпатлантару тупӑр. Аффикс мелӗпе ҫыхӑнса пулнӑ иккӗмӗшле япала ятне ҫырӑр. Пӗтӗмпе – 4 балл.

5. Предложенисен чиккисене тупӑр та чарӑну палли лартса ҫырса илӗр. Местоименисене йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.
«*Анчах ку ҫуна тинех ярӑнма юрӑхлӑ пулас ҫук ӗнтӗ ӑна эпир лаҫҫа кӗртсе хурӑпӑр вӑл пирӗн ваттисене турттарса леҫмелли ҫунашка пулӗ аннепе эсӗ ватӑлсан та сире ҫак ҫунашка ҫине лартса хам килсе пӑрахӑп». ( Г.Волков ҫырнинчен).* Пӗтӗмпе – 6 балл.

6. Шатра Михалян хӗрӗ мӗн ятлӑ? Хӑш хайлаври сӑнарсем? Авторӗ кам? Пурӗ – 6 балл.

7. «Эп пӗлеп: сӑмахпа этеме амантма та пулать, ӳкерме те, ӳкнине те пулать ҫӗклеме». Ҫак сӑмахсене калаканӗ кам? Тӗрӗс хуравшӑн– 4 балл.

8. «Мул тупни» хайлавӑн авторӗ кам? Мӗн вӑл мул? Пурӗ – 4 балл.

9. Кӗрхи уйӑх ячӗсене ҫырӑр. Тӗрӗс хуравшӑн – 3 балл.

10. 5-мӗш ӗҫре панӑ текстра Г.Волков мӗнле тема хускатнӑ? Мӗн каласшӑн пулнӑ автор? Тулли хуравшӑн – 5 балл.